27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944
СЕНТЯБРЬ
26
ЫТЛАРИКУН
190(6685) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ



Ĕçсынни депутачĕсен райсовечĕсен исполкомĕсемпе ВКП(б) райкомĕсем тăратнă тăрăх, тырпул пухса кĕртес ĕçре тухăçлăн та лайăх ĕçленĕшĕн ял-хуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри Хисеп хăми çине çак колхозсене кĕртнĕ:

Чкаловски район тăрăх

30. «Красный Октябрь» колхоз (председателĕ Булатов юлташ). Ку колхоз тырăсене августăн 14-мĕшĕнче вырса пĕтернĕ, сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне кĕлтесене капана хывса çитернĕ, сентябрĕн 7-мĕшĕ тĕлне авăн çапса пĕтернĕ, кĕрхи тырăсене чи лайăх вăхăтра акса хăварнă, государствăна тырă парса татнă, халь 1945-мĕш çулшăн аванс шучĕпе тырă пама пуçланă.

Шупашкар районĕ тăрăх

31. «Красная Волга» колхоз (председателĕ Капранов юлташ). Ку колхоз тырăсене срокчен пухса кĕртнĕ, сентябрĕн 17-мĕшĕ тĕлне авăн çапса пĕтернĕ, кĕрхи тырăсене чи лайăх вăхăтра акса хăварнă, сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне государствăна тырă парса татнă.

Вăрнар районĕ тăрăх

32. Кольцовкăри Ленин орденлĕ Сталин ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Васянин юлташ, пуçламĕш парторганизаци секретарĕ Алексеев юлташ). Çак колхоз 650 гектар тырра срокчен вырса пĕтернĕ, кĕлтесене капана хывса çитернĕ, кĕрхи тырăсене чи лайăх вăхăтра акса хăварнă, государствăна тырă парса татнă тата 1945 çулшăн аванс шучĕпе 3.000 пăт панă.

ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн пленумĕ

Сентябрĕн 23-мĕшĕнче ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн X-мĕш пленумĕ пулса иртрĕ. Пленум Шупашкар хулине хĕле хатĕрлесе çитересси çинчен сÿтсе-яврĕ. Çак ыйтупа ĕçсынни депутачĕсен Шупашкар хула совет исполкомĕн председателĕ П. Аникин юлташ доклад туса пачĕ.

— Хулана хĕле хатĕрлесси — пысăк та ответлă ĕç, — тет докладчик. — Хĕле вăхăтра та тĕплĕн хатĕрленсе çитесси вăл хамăрăн тыла татах та ытларах тĕреклетесси пулса тăрать. Хĕллехи вăхăтра хамăрăн электростанцисемпе водопровода, хула промышленноçне, коммуналлă предприятисене пĕр чарăнмасăр ĕçлемелле тăвас пулать, мĕнпур предприятисемпе учрежденисем валли çителĕклĕ таран вутă, хула халăхĕ валли — çĕрулмипе пахча-çимĕçсем хатĕрлесе хумалла. Хĕле хатĕрленес тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса ирттерме вăхăт çав тери сахал юлчĕ, халĕ ку енĕпе нимĕн тумасăр пĕр кун ирттерни те, тĕрĕссипе, çĕршыв умĕнче айăпа кĕни пулса тăрать.

Пирĕн иртнĕ çулхи йăнăшсене шута илмелле. Хăшпĕр руководительсем çаврăнăçусăррине пула, уйрăм предприятисем вутăсăр ларнă, йĕркеллĕн ĕçлеймен, хăшпĕр ОРС начальникĕсем, уйрăмах хулари столовăйсен тресчĕ, столовăйсем валли кирлĕ таран апат-çимĕçсем хатĕрлемен, çавна пула хĕллепе çуркунне халăха апатлантарас ĕçре йывăрлăхсем пулнă.

Кăçал çанталăк лайăх тăрать. Çĕрулмипе пахча-çимĕçсем ăнса пулчĕç. Çаксемпе пирĕн туллин усă курмалла.

Аникин юлташ уйрăм предприятисемпе учрежденисем хĕле хатĕрленес тĕлĕшпе мĕнле ĕçлени çинчен чарăнса тăрать.

Хулари промышленность хĕллехи вăхăтра пĕр чарăнмасăр ĕçлесси, чи малтан, пирĕн электростанцисем мĕнле ĕçленинчен килет. Хулари энергетика бази нумай ÿсрĕ. Атăл леш енчи электростанцине ĕçе янă май, эпир электроэнергипе хулари мĕнпур промышленноçа, коммуналлă хуçалăха тата пĕтĕм хулари халăха тивĕçтерме пултаратпăр. Анчах электростанцисем ăнăçлă ĕçлесси вĕсем кашниех хĕле тĕплĕн хатĕрленсе çитнинчен килет.

Тÿрех каламалла, ку ĕç питех те çителĕксĕр пулса пырать. Хулари электростанцинче дизельсене тĕрĕслесе тухас тата юсас тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса ирттермелле. Промышленноçа шыв парса тăмалли иккĕмĕш шыв çулне хывса çитермен. Станцин тĕп корпусне ăшă тытакан тăвас пулать. Ку ĕççене пурне те Чăвашстройтрестăн пурнăçа кĕртмелле, анчах вăл çаплах ĕçрен пăрăнса пырать.

Уйрăмах пысăк ĕçсем туса ирттермелле Атăл леш енчи электростанцинче. Унăн ĕçĕ ăнăçлă пулса пырасси торф предприятийĕ мĕнле ĕçленинчен чылай килет. Торф кăлармалли плана тултарнă. Анчах ку вăл ĕçĕн пĕр пайĕ кăна, кăларнă торфа типĕтмелле, электростанцине турттарса тăмалла. Анчах кунти чугун çула хĕле хатĕрлес тĕлĕшпе нимĕн те туман. Депопа автомашинăсем тăратмалли гаража тума тытăнман. Торф предприятийĕн нимĕнле урапа та, нимĕнле çуна та çук. Рабочисем пурăнакан çуртсене хатĕрлес тĕлĕшпе те нимĕн те тумаççĕ.

Торф предприяти директорĕ Шебеко тата парторганизаци секретарĕ Сырцов юлташсен хăйсен предприятине хĕле хатĕрлес тĕлĕшпе халех татăклă мерăсем йышăнмалла, ахаллĕн вĕсем Атăл леш енчи электростанцин ĕçне пысăк чăрмавсем кÿме пултараççĕ.

Çавăн пекех хулари ытти предприятисенче те хĕле хатĕрленес тĕлĕшпе тумалли ĕçсем питех те нумай. Хăшпĕр предприятисем, сăмахран, 1-мĕш типографи, хĕле хатĕрленме тытăнман та темелле. Типографи çуртне питĕрмен, кантăкĕсем çĕмĕрĕлсе пĕтнĕ, кăшт сăмăр çусанах, пĕтĕм типографие шыв анать. Типографи директорĕ Шиманский юлташ хĕле хатĕрленес тĕлĕшпе виçĕ уйăх хушши ĕнтĕ план тăвать, анчах çав плана халĕ те туса çитермен.

Промышленность предприятийĕсемпе артельсем хĕлле ĕçлеме хăйсем валли чĕртавар хатĕрлесе хурас тĕлĕшпе пачах та çителĕксĕр ĕçлеççĕ.

Пурăнмалли çуртйĕрсене, коммуналлă предприятисене, культура учрежденийĕсене хĕле хатĕрлес енĕпе те тумаллисем çав тери нумай. Пурăнмалли çуртсене, рабочисен общежитийĕсене юсас тата çĕнĕрен тăвас ĕç уйрăмах вăрахăн пырать.

Чи пысăк задачăсенчен пĕри — вутă хатĕрлесси пулса тăрать. Хулана пĕтĕмпе 275 пин кубометр вутă кирлĕ пулать. Çав шутран кĕркуннехи йĕпе-сапаллă вăхăт валли, 1945 çулхи январĕн 1-мĕшĕччен, 96 пин кубометр кирлĕ.

Республика Совнаркомĕпе Обком бюровĕ хула валли çуллапа кĕркунне вутă хатĕрлеме план пачĕç. Çав план тăрăх, июнь—сентябрь уйăхĕсем хушшинче 132,4 пин кубометр вутă касса хатĕрлемелле, 38,2 пин кубометр турттармалла. Ку шутран 95,4 пин кубометр предприятисемпе учрежденисен хăйсен касса хатĕрлемелле, 28,3 пин кубометр турттармалла. Сентябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмпе 62,5 пин кубометр касса хатĕрленĕ, вĕсенчен предприятисемпе учрежденисем хăйсем 40,8 пин кубометр хатĕрленĕ. Çапла ĕнтĕ, вутă хатĕрлесе турттарас ĕç пачах та çителĕксĕр пулса пырать. Вăрманпромхоз енĕпе вутă 175 учрежденипе организаци хатĕрлемелле. Вĕсенчен 33 организаци паянхи куна çитсе те ĕçе тытăнман. Вĕсен шутне Госторгинспекци, ЧАССР Прокуратури, Заготзернон республикăри контори, Стройконтора, Уполнаркомзаг, Маслопром тресчĕ, транспорт Управленийĕ тата ыттисем те кĕреççĕ.

Вутă хатĕрлес, уйрăмах турттарас ĕçе хăвăртлатмалла, лайăх çанталăкăн кашни сехечĕпе туллин усă курса юлмалла, хулари предприятисемпе учрежденисем тата халăх валли çителĕклĕ вутă хатĕрлесе хумалла.

Хула халăхĕ валли çĕрулмипе пахча-çимĕçсем çителĕклĕ хатĕрлесе хурасси те пысăк ыйту пулса тăрать. Кăçалхи çул ОРС-сем, подсобнăй хуçалăхсем тата хулари çынсем хăйсем тĕллĕн çĕрулмипе пахча-çимĕçсем нумай лартса турĕç. Тухăçлă пулнă çимĕçсене вăхăтра та пĕр тăккаламасăр пухса кĕртмелле, вĕсене лайăх пăхса усрамалла. Кунсăр пуçне, сутуилÿ организацийĕсем, предприятисем колхозсемпе договорсем туса нумай пахча-çимĕç илме пултараççĕ. Анчах, çулсерен тенĕ пекех, ку ĕç договорсем тунинчен малалла каяймасть.

Хĕле хатĕрленес тĕлĕшпе пирĕн çар çыннисен çемьисене пулăшассишĕн уйрăмах çине тăрса тăрăшмалла.

Доклад тăрăх пренисенче пурĕ 13 çын тухса каласрĕç. Канатов юлташ, хăйсен предприятийĕ хĕле хатĕрленес тĕлĕшпе мĕнле ĕçлени çинчен пĕлтерсе, рабочисем валли урана тăхăнмаллисем юсас ĕçе тÿрех цехсенче организацилени çинчен каласа пачĕ. Çак паха пуçарăва ытти предприяти руководителĕсен те йышăнса илмелле.

Пренисенче тухса калакансем: Бенский, Баймуратов (Атăл леш енчи электростанци директорĕ), Кошевер (пир-авăр фабрики), Петрушова (Водосвет), Судаков (Чебторг), Каплин (пĕр заводри ОРС начальникĕ), Енисеев (Военторг), Мойсик (партин хула комитечĕ), Калинцев (ялхуçалăх институчĕ), Петрушов (завод), Меламед (столовăйсен тресчĕ) юлташсем хăйсен предприятийĕсемпе учрежденийĕсем хĕле мĕнле хатĕрленни çинчен каласа пачĕç, çак ĕçри пысăк çитменлĕхсене палăртрĕç.

Пленум ĕçне ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ И. М. Чарыков тата Чăваш АССР Совнаркомĕн председателĕ А. М. Матвеев юлташсем хутшăнчĕç.

Чарыков юлташ пленумра тухса каланă хăйĕн сăмахĕнче хĕле хатĕрленес ĕçре пуçламĕш парторганизацисемпе вĕсен секретарĕсен ответлăхне ÿстересси çинчен чарăнса тăчĕ, ĕçри çитменлĕхсене çивĕччĕн критиклерĕ, хулари парторганизацие умне хĕле хатĕрленес тĕлĕшпе практикăллă задачăсем лартрĕ.

— Тумалли ĕçсем питех те нумай, анчах эпир пĕтĕм вăя хурса тимлĕн тăрăшса ĕçлесен, вĕсене ăнăçлăнах пурнăçа кĕртме пултаратпăр, — терĕ Чарыков юлташ. — Кашни руководителĕн, пуçламĕш парторганизаци секретарĕн хăйсен предприятине е учрежденине, чăн-чăн хуçасем пулса, хĕле тĕплĕн хатĕрлесе çитермелле.

Пленум, хĕле хатĕрленес ĕçри пысăк çитменлĕхсене палăртса, çав çитменлĕхсене пĕтермелли майсене кăтартса, тивĕçлĕ решени йышăнса хăварчĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

СЕНТЯБРĔН 23-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

ЛЕНИНГРАД фрончĕн çарĕсем, наступление вăйлатса пырса, сентябрĕн 23-мĕшĕнче Рига заливĕнчи паха порта — **ПЯРНУ (ПЕРНОВ)** хулине тата Эстонин кăнтăр пайĕнчи шоссе çулĕсен паха узелĕ пулса тăракан **ВИЛЬЯНДИ** хулипе чугун çул станцине туртса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 70 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — **ТЮРИ** хули, **ВАХАСТУ, КЯДВА, ЛЕЛЛЕ, КЯРУ, КЯРЕВЕРЕ, ВАНАВЯНДРА, ВЫХМА, РЕГУЛЬДИ** ятлă пысăк ялсем тата **ЛЕЛЛЕ, КЯРУ, ОЛЛЕПА, ВЫХМА** ятлă чугун çул станцийĕсем.

БАЛТИКА тăрăхĕнчи 3-мĕш фронт çарĕсем çаплах наступлени туса пынă, **ВАЛМИЕРА** хулине туртса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 80 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — **КЯРСТНА, МЯЭКЮЛА, СУРЕ-СИЛЬМА, ЧУМПИ, РЕНЦЕНЫ, ЯУНИЕРЦЕНЫ** ятлă пысăк ялсем тата **ПИКСАРИ, САУЛЭ** ятлă чугун çул станцийĕсем.

РИГА хулинчен хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем, малалла тапăнса пырса, халăх пурăнакан 150 пункта ытла туртса илнĕ, вăл шутра — **БАШИ, БУТЛЭРИ, ЛЮТЕНЫ, МИРТИ, МУШТЕС, МЕНДЕЛЭ, КОАКНЕСЕ** ятлă пысăк ялсем тата **РАНКА, РОПЛАЙНИ, БАЛТАВА, КОАКНЕСЕ** ятлă чугун çул станцийĕсем.

Фронтăн ытти участокĕсенче чылай пунктсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Сентябрĕн 22-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 57 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 39 самолетне персе ÿкернĕ.

☆ ☆ ☆

ПИРĔН АВИАЦИ РИГА ПОРЧĔПЕ ПЯРНУ (ПЕРНОВ) ПОРТНЕ ТАПАННИ

Сентябрĕн 23-мĕшĕ ыран тенĕ чухне çĕрле пирĕн инçене вĕçекен авиаци Рига порчĕпе Пярну (Пернов) портне тапăннă.

Бомбăсем пăрахнине пула, Рига портĕнче 20 тĕлте пушар тухнă. Нимĕçсен çар склачĕсем çуннă. Экспорт гаванĕпе Береговая чугун çул станцийĕ районĕнче вăйлă взрывсем пулнă.

Пярну портĕнче бомбăсем нимĕçсен причалсем патĕнче тăракан суднисем хушшинче çурăла-çурăла кайнă. Темиçе тĕлте пушар тухнă. Пĕр пушарĕнче вăйлă взрыв пулнă. Çавăн пекех тата тăшманăн чугун çул станцийĕнче тăракан эшелонĕсем хушшинче те вăйлă пушарсем пулнă.

☆ ☆ ☆

ПИРĔН ТИНĔС АВИАЦИЙĔ НИМĔÇ ТРАНСПОРЧĔСЕНЕ ПЫРСА ÇАПНИ

Хĕрлĕ Ялавлă Балтика флочĕн авиацийĕ сентябрĕн 22-мĕшĕнче кăнтăрла хăйĕн пысăк вăйĕсемпе тăшманăн Таллин (Ревель) портĕнчен тăракан карапĕсене хăваланă. Нимĕç çарĕсем ларса пынă транспортсене Финн заливĕпе Балтика тинĕсĕнче хăваласа çитнĕ. Пирĕн тинĕс летчикĕсем, штурмласа тата бомбăсемпе торпедăсем пăрахса, кун каçа нимĕçсен 11 транспортне путарнă. Унсăр пуçне, тăшманăн 3 транспорчĕпе пĕр тральщикне самаях пысăк сиен кÿнĕ.

СЕНТЯБРĔН 24-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Хĕрлĕ Ялавлă **БАЛТИКА** флочĕн карапĕсемпе чаçĕсем сентябрĕн 24-мĕшĕнче Балтика тинĕсĕ хĕрринчи паха тинĕс-çар базине — **ПАЛЬДИСКИ** хулине (**БАЛТИЙСКИ** порта) туртса илнĕ.

Сентябрĕн 24-мĕшĕнче **ТАЛЛИН** хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре тата кăнтăртарахра пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă, 200 ял ытла туртса илнĕ, вăл шутра — **ПЯРТЛИ, КОХИЛА, ЮРУ, РАПЛА, КЭАВА, АЗУКЮЛА, МАРЬЯМА** ятлă пысăк ялсем.

ВАЛМИЕР хулинчен çурçĕртерехре тата кăнтăртарахра пирĕн çарсем, наступление вăйлатса пырса, **РУЙЕНА** хулипе чугун çул узелне, **СМИЛТЭНЭ** хулипе чугун çул станцине туртса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 200 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — **НУЙЯ, ОДРА, ДИТЕРИ, ЭНДЗЕЛЭ, СПАЛИО, ДУРЕ, СЕТИ, РУБЕНЕ, ЛИЕНА, РАУНА** ятлă пысăк ялсем тата **СТРЕНЧИ, БРЕНГУЛИ, ВИКСЕЯ** ятлă чугун çул станцийĕсем.

РИГА хулинчен хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем вăйлă çапăçнă хыççăн халăх пурăнакан 250 пункта ытла туртса илнĕ, вăл шутра — **СПУЛГАС, МЕЖЕЧИ, МАЙСЭЛИ, БЕЙГУЖЕНЫ, КЛИДИНЕ, ДРАЦЕНЫ, МЕНДЕЛИ, БРИЕЖИ, СКРИВЕРИ** ятлă пысăк ялсем тата **УБЕЯ, ТАУРУПЕ, АЙЗКРАУКЛЕ** ятлă чугун çул станцийĕсем.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çÿренĕ тата чылай пунктсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Сентябрĕн 23-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 64 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 56 самолетне персе ÿкернĕ.

☆ ☆ ☆

ПИРĔН ТИНĔС АВИАЦИЙĔ ТĂШМАН СУДНИСЕНЕ ПЫРА-ПЫРА ÇАПНИ

Хĕрлĕ Ялавлă Балтика флочĕн авиацийĕ çаплах Балтика тинĕсĕ çинчи тăшман суднисене пыра-пыра çапнă. Эзель утравĕнчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн бомбардировщиксемпе авианосецсем сентябрĕн 22-мĕшĕнче кăнтăрла нимĕçсен 3 пысăк транспортне тата пĕр хурал карапне шыва путарнă. Либава хулинчен хĕвеланăçнерехре совет летчикĕсем нимĕçсен 10.000 тонна таякан транспортне путарнă. Унсăр пуçне тата нимĕçсен пĕр транспортне Виндава хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре путарнă. Çапла вара, пĕтĕмпе тăшманăн 5 транспортне тата пĕр хурал карапне путарнă.

☆ ☆ ☆

Таллин хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре тата кăнтăртарахра пирĕн çарсем çаплах ăнăçлă наступлени туса пынă. Тăшман хăйĕн çĕмĕрсе тăкнă чаçĕсене йĕркене кĕртме тата хирĕç тăрса çапăçма хăтланать. Совет танкĕсемпе пехоти нимĕçсене татти-сыпписĕр пыра-пыра çапаççĕ, вĕсене хушăри позицисенче чарăнса тăма памаççĕ. Пирĕн чаçсем шоссе çулĕсен Пяртли, Кохила тата Рапла ятлă паха узелĕсене туртса илнĕ. Ним тĕлли-паллисĕр каялла чакакан гитлеровецсем нумай тĕлте чугун çулсемпе шоссе çулĕсем çинчи кĕперсене те ишсе хăварма ĕлкĕреймен. Пĕр чаçри подразделенисем вăрманти çапăçура 600 нимĕç салтакĕпе офицерне çити вĕлерсе пĕтернĕ. Трофейсем тытса илнĕ, вăл шутра—26 хир туппи тата хăй тĕллĕн çÿрекен 5 тупă. Тепĕр участокра пирĕн хăй тĕллĕн çÿрекен тупăсемпе мотопехота тăшман тылне кĕрсе кайнă та сасартăк нимĕçсен колоннине атакăланă. Кĕске вăхăт хушши пынă çапăçура тăшмана аркатса тăкнă. 500 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ. 60 юсавлă автомашина, танксене пемелли 17 тупă тата ытти трофейсем те тытса илнĕ. Çĕмĕрсе тăкнă дивизисен салтакĕсемпе офицерĕсем нумайĕшĕ вăрмана тарса пĕтнĕ. Пирĕн подразделенисем гитлеровецсен уйрăм ушкăнĕсене шыраса тытаççĕ те хĕçпăшалсăрлантараççĕ.

* * *

Валмиер хулинчен çурçĕртерехре пирĕн çарсем, тăшманăн инженерла йышлă чăрмавĕсене тата хăй тĕллĕн пулнă чăрмавсене çĕнтере-çĕнтере, Руйена хули патне пырса тухнă. Тăшман ку хулана хытă хÿтĕленĕ, темиçе хутчен те контратака тунă. Совет пехотинецĕсемпе танкисчĕсем, хăюллă атакăласа, Руйена хулипе чугун çул станцине туртса илнĕ. Нимĕç пехотин икĕ батальонне пĕтĕмĕшпех пĕтерсе тăкнă. Пирĕн çарсем ĕнер туртса илнĕ Валмиер хули районĕнче хаяр çапăçусем пулса иртнĕ. Тăшман унти çапăçăва хăйĕн танкĕсемпе пехотин пысăк вăйĕсене кĕртсе янă, Валмиер хулине каялла туртса илме хăтланнă. Пирĕн çарсем, хăватлăн пырса çапса, нимĕçсене сирсе янă, çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен вĕсене пысăк çухату тÿстернĕ. Пирĕн Псков хулипе Рига хули хушшинчи шоссе çулĕ тăрăх наступлени туса пыракан чаçсем 25 километр таран малалла кайнă. Нимĕçсен оборонин вăйлă тĕреклетнĕ пункчĕ пулса тăракан Смилтэнэ хулине туртса илнĕ.

Пирĕн авиаци сывлăшра пуçпулса тăрать, тăшманăн каялла чакакан çарĕсене бомбăсем пăрахса штурмлать. Тĕмен чухлĕ тупă, çар хатĕрĕсем турттарса пыракан 100 автомашинăпа лава ытла çĕмĕрсе тăкнă. Некрасов лейтенант командир пулса ертсе пыракан истребительсен ушкăнĕ пирĕн Валмиер хули районĕнчи çарсене хÿтĕлесе пынă чухне нимĕçсен 3 самолетне персе ÿкернĕ. Вĕсенчен иккĕшне Некрасов лейтенант хăй персе ÿкернĕ. Пирĕн летчиксем кун каçиччен нимĕçсен 18 самолетне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Рига хулинчен хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем çапăçса малалла куçса пынă. Пĕр соединени чаçĕсем, Гулбенэ хулипе Рига хули хушшинчи чугун çул тăрăх наступлени туса пырса, Гауя шывĕ хĕррине пырса тухнă. Нимĕçсем çак шыв урлă хунă каçăсене пурне те сирпĕнтерсе янă. Вĕсем, малтанах хатĕрлесе хунă оборона позицийĕпе усă курса, пирĕн çарсене малалла куçса пыма чарса лартма хăтланнă. Совет боецĕсем. Гауя шывĕ урлă каçнă та тăшман оборонине татнă. Пирĕн тепĕр соединени чаçĕсем Мадона хулипе Рига хушшинчи шоссе çулĕпе чугун çул тăрăх наступлени туса пынă, нимĕçсем вĕсене хытă хирĕç тăнă. Тăшманăн хăй тĕллĕн çÿрекен артиллерийĕпе вăйлăлатнă пехоти темиçе хутчен те контратака тунă. Швецов капитанăн танковăй батальонĕ тăшманăн танкĕсене тата хăй тĕллĕн çÿрекен тупписен ушкăнне аркатса тăкнă. Пирĕн танксем хыççăн наступлени туса пыракан пехота Таурупе чугун çул станцине туртса илнĕ. Кун каçиччен халăх пурăнакан 250 пункта ытла нимĕç захватчикĕсенчен тасатнă. Нимĕçсенчен 9 юсавлă танк, 65 тупă тата ытти трофейсем те тытса илнĕ. Тыткăна чылай илнĕ. Тыткăна илнисем пĕлтернĕ тăрăх, нимĕçсен 436-мĕшпе 437-мĕш пехотнăй полкĕсенчен, пысăк çухатусем пулнă пирки, пĕр батальон туса хунă, унта та пулин салтаксем çителĕклĕ мар; 31-мĕш пехотнăй полкран пĕр рота туса хунă, ку ротăра мĕн пурĕ те 35 çын кăна.

* * *

Мариамполь хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн подразделенисем тăшмана сасартăк атакăланă та рашаран хăваласа кăларнă. Нимĕçсем, çав позицие каялла туртса илме хăтланса, ултă хутчен контратакăна кĕре-кĕре кайнă, анчах та вĕсен атакисем пĕри те ăнăçлă пулман. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 200 вилли таран выртса юлнă.

Пирĕн авиаци Хĕвелтухăç Пруссири Шталлупенен чугун çул станцине тапăннă. Станци территорийĕнче вăйлă пушарсем тухнă. Чугун çул эшелонĕсемпе горючи цистернисем çуннă.

ВĂРНАРПА ШУПАШКАР РАЙОНĔСЕМ ГОСУДАРСТВĂНА ТЫРĂ ПАМАЛЛИ ПЛАНА ТУЛТАРНĂ

ВАРНАР, сентябрĕн 24-мĕшĕ. (ТЕЛЕГРАФПА). Районри колхозсем государствăна тырă памалли плана, вăл шутра МТС-сем ĕçленĕшĕн натуроплата тÿлемелли плана та, пĕтĕмпех тултарчĕç.

Райсовет исполкомĕн председателĕ
ОСИПОВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ
КОРОТКОВ,
Хатĕрлев Комиссариачĕн районри уполномоченнăйĕ
ИГОРЕВ.
Заготзерно конторин управляющийĕ
КЛИБЫШЕВ.

* * *

КУКЕÇ, сентябрĕн 24-мĕшĕ. (ТЕЛЕГРАФПА). Районри колхозсем государствăна 1944 çулта тырă памалли плана, вăл шутра МТС-сем ĕçленĕшĕн натуроплата тÿлемелли плана та, пĕтĕмпех тултарчĕç.

Райсовет исполкомĕн председателĕ
МИРОНОВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ
КАРАУШЕВ,
Хатĕрлев Комиссариачĕн районри уполномоченнăйĕ
ВЕДИН.

30 колхоз государствăна тырă парса татнă

ШАХАСАН. Районри колхозсем государствăна тырă парса татас тĕлĕшпе социализмлă ăмăртăва анлăн сарса ячĕç. Çак иртнĕ вунă кун хушшинче кăна хатĕрлев пунктне 10.260 центнер тырă леçсе панă. Районри 30 колхоз государствăна тырă памалли плана пĕтĕмпех тултарнă.

Район уйхирти тырпула вырса пĕтерчĕ, 6433 гектар çинчи тырра капана хывре, 4752 гектар тыррине çапрĕ.

Ухманти «Победа», Ворошилов, Молотов ячĕсемпе тăракан колхозсем, «Новая жизнь, «Парижская Коммуна» колхозсем, ăмăртăва анлăн сарса пырса, тырпулсене вăхăтра пухса кĕчĕç, государствăна тырă парса татрĕç. Вĕсем силос хывмалли плана та ытлашшипех тултарчĕç.

А. АНТОНОВ.

Кĕрхи çĕртме тунă çĕрте çамрăксен ăмăртăвне анлăн сарса ярар

Кĕрхи çĕртме туни çитес çулхи вăйлă тырпулшăн кĕрешес ĕçре питех те пысăк вырăн йышăнса тăнине шута илсе, ВЛКСМ Чăваш Обкомĕ комсомолăн колхозсемпе совхозсенчи организацийĕсене çав ĕçе анлăн хутшăнма хушнă.

ВЛКСМ райкомĕсемпе пуçламĕш организацийĕсен, кĕрхи çĕртме тумалли плана кашни колхоз, кашни совхоз ăнăçлăн тултартăр тесе, ялсенчи комсомол организацийĕсен, çамрăк сухаçăсен тата трактористсен социализмлă ăмăртăвне организацилемелле.

Çак ыйтупа колхозсемпе совхозсенче çамрăксен пухăвĕсене ирттермелле. Колхоз правленийĕпе тата совхоз директорĕпе килĕшсе, çамрăк сухаçăсене тата совхозра ĕçлекен рабочисене уйăрса хумалла, вĕсем çумне плугсемпе туртăм вăйне çирĕплетсе хумалла.

Совхозсемпе колхозсен пĕтĕмĕшле планĕпе килĕштерсе, пилĕккунлăх заданисем хатĕрлемелле те вĕсене кашни çамрăк сухаçă патне çитермелле. Трактор бригадисемпе çамрăк трактористсем хушшинче кашни трактор пуçне панă задание срокчен пурнăçлассишĕн ăмăрту сарса ямалла. Колхозсемпе совхозсенчи çамрăксен звенисене çирĕплетмелле, çĕнĕ звеносем организацилемелле, çав звеносене хăйсен участокĕсем çинче активлăн ĕçлеттермелле.

Комсомолецсен кĕрхи çĕртме тунă çĕрте колхозсемпе колхозниксен майракаллă шултăра выльăхĕсемпе туллин усă курас ĕçе пуçарса ямалла.

Çамрăк сухаçăсен ăмăртăвне куллен ертсе пырасси — комсомол организацийĕсен тивĕçĕ. Социализмлă ăмăртăвăн итогĕсене районсенче пилĕк кунта пĕрре, колхозсенче кашни кунах пăхса тухса сÿтсе-явмалла.

Выльăхсен йышĕ ÿсет

ВĂРМАР. «Хĕрлĕ Шăхаль» колхозра выльăх-чĕрлĕх йышĕ ÿснĕçемĕн ÿссе пырать. Виçĕ çул хушшинче кунта пĕр выльăх та вилмен. План тăрăх майракаллă шултăра выльăхсем 135 пуç пулмалла пулсан, вĕсем 153 пуçа, сурăхсем 211 пуçа, сыснасем 120 пуç вырăнне 213 пуçа çитнĕ.

Çак çитĕнÿсем ферма заведующийĕпе унти работниксем тăрăшса тата пĕр улшăнмасăр ĕçленинчен килет. Акă Васса Черзорова виçĕ çул хушши фермăсен заведующийĕ пулса ĕçлет. Çавăн пекех Горбунова, М. Чернова, А. Чернова доярккăсем те виçшер çул ĕçлеççĕ. Вĕсем хăйсем ĕçлеме пуçланăранпа кашниех 31—36-шар пăру пăхса ÿстернĕ. Пăрăвĕсем пурте таса та самăр. Лайăх ĕçленĕшĕн вĕсене çулсеренех 75-шер литр сĕт ĕçшĕн хушса тÿлеççĕ.

Кăçал фермăра ĕнесене пурне те (пĕтĕмпе 41 ĕне) чуптарса хăварнă.

Л. РОДИОНОВ.

Фронтовиксен ачисене пулăшаççĕ

ÇЕРПУ. Лĕпсер ялсоветĕнчи колхозсем фронтовиксен ачисене пулăшас тĕлĕшпе çак кунсенче лайăх ĕç пуçарчĕç. Вĕсем фронтовиксен ачисем валли ăшă япаласем 350 штук, 24 пăт тирă, 72 пăт çĕрулми пухнă. «Новая жизнь» колхозăн председателĕ М. Скворцов юлташ виçĕ костюм, Лĕпсерти 7 çул вĕренмелли шкулăн директорĕ пĕр ваткăллă пиншак. «Новая сила» колхозри А. Васильева колхозница пĕр кĕпе, пĕр мăшăр çăм тăла, пĕр кĕрепке çăм, саппунпа тутăр. «Красная Армия» колхозăн председателĕ Семенов юлташ пĕр килограмм çăм, пĕр тир, пĕр çĕлĕк панă.

Фронтовиксен ачисене пулăшас тĕлĕшпе ытти колхозсен те Лĕпсер ялсоветĕнчи колхозсем пек ĕçлемелле.

П. П.

И. В. Сталин Маршал Британи посолне Керр господина тата Америка посолне Гарриман господина йышăнни

Сентябрĕн 23-мĕшĕнче И. В. Сталин Маршал Британи посолне Керр господина тата США посолне Гарриман господина йышăннă.

Çав посолсем, США президенчĕ Рузвельт господин тата Великобритани премьер-министрĕ Черчилль господин хушнипе, Сталин юлташа Квебек хулинчи конференцире йышăннă решенисем çинчен каласа панă.

Калаçура Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов юлташ пулнă.

ОКТЯБРЬ УЯВĔ УМĔНХИ СОЦИАЛИЗМЛĂ ĂМĂРТУ

Ăмăртăва хутшăннă хыççăн

ÇĔМĔРЛЕ, сентябрĕн 23-мĕшĕ. (Телефонпа). «Большевик» завод коллективĕ уяв умĕнхи ăмăртăва хутшăнса илнĕ обязательствăсене пурнăçа кĕртме тытăнчĕ. Вăл куллен планран ирттерсе 200 килограмм тоннида кăларма пулнă. Халĕ ăна ăнăçлăн пурнăçлать. Ĕç тухăçлăхне ÿстерес, продукцин хăйне ларакан хакне йÿнетес, чĕр таварсем перекетлес тĕлĕшпе илнĕ обязательствăсене те пурнăçласа пырать.

Рабочисем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ, çĕнĕ çитĕнÿсем тăваççĕ. Тимĕрçĕ Закалябин август уйăхĕнчи плана 247 процент тултарнă. Халĕ вăл нормăна 250 — 260 процент тултарать. Слесарь Моторин август уйăхĕнче нормăна 180 процент тултарса ĕçленĕ пулсан, халĕ 230 процент тултарать. Нормăна ирттерсе тултаракансен йышĕ ÿссех пырать.

Завод коллективĕ хĕле хатĕрленес тĕлĕшпе тимлĕн ĕçлет. Цехсене, пурăнмалли çуртсене юсаççĕ. Хĕлле валли чĕртаварсем, топливо çителĕклĕ хатĕрлеме тăрăшатпăр.

Г. ЕГОРОВ.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ыйтупа пулса иртнĕ канашлу

Сентябрĕн 22—23-мĕшĕсенче Шупашкарта ВКП(б) райкомĕсен иккĕмĕш секретарĕсен канашлăвĕ пулса иртрĕ.

Канашлура выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе государство планне мĕнле тултарса пыни çинчен ВКП(б) Обком секретарĕн выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекен заместителĕ Мартынов юлташ тата СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «Колхозсемпе совхозсенче лашасен хисепне ÿстермелли тата вĕсене пăхас ĕçе лайăхлатмалли мерăсем çинчен» йышăннă постановление мĕнле пурнăçласа пыни çинчен Çĕрĕç Халăх Комиссарĕн заместителĕ Троицкий юлташ доклад туса пачĕç.

Пренире Романов (Чкаловское), Трофимов (Советское), Серяев (Пăрачкав), Васильев (Маслотрест) юлташсем тухса каларĕç.

Юлашкинчен ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ Ахазов юлташ сăмах тухса каларĕ. Вăл выльăх-чĕрлĕх йышне ÿстерес тĕлĕшпе начар ĕçлекен районсене критиклерĕ, ВКП(б) райком секретарĕсен, çавăн пекех партипе комсомол организацийĕсен выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе татах та тимлĕнрех ĕçлеме кирли çинчен чарăнса тăчĕ.

Кун хыççăн канашлу участникĕсем çакăн пек лекцисем итлерĕç:

«Выльăхсене хĕллехи тапхăрта пăхса усрасси çинчен» (лекторĕ — СССР Госпланĕн Чăваш республикинчи контролерĕ зоотехник Бережная юлташ).

«Ветеринари мероприятийĕсем (менингитпа тата кĕçĕ чирĕпе кĕрешесси т. ыт.) çинчен» (лекторĕ — ЧАССР Совнарком председателĕн выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекен заместителĕ Герасимович юлташ).

«Выльăх-чĕрлĕх фермисенче ĕçе йĕркелесси тата ĕçшĕн хушса тÿлесси çинчен» (лекторĕ—Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссарĕн выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекен заместителĕ Купцов юлташ).

Çутĕç учрежденийĕсене ертсе пырас ĕçе вăйлатмалла

ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ кăçал июнĕн 14-мĕшĕнче пирĕн республикăри çутĕç учрежденийĕсен ĕçĕсем çинчен ятарласа постановлени йышăннă. Вăл постановленире, республикăри çутĕç учрежденийĕсенчен чылайĕшĕсем çителĕксĕр ĕçленине палăртса, халăх хушшинче культура ĕçне татăклăнах лайăхлатмалли майсене кăтартса панă.

ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн постановленине пурнăçа кĕртес шутпа, партин Обкомĕн бюровĕ конкретлă мероприятисем палăртса пачĕ. Вăл мероприятисене пурнăçа кĕртни çутĕç учрежденисен ĕçне лайăхлатма пулăшать. Çавăнпа пĕрлех партин Обкомĕ Чăваш АССР Çутĕç Халăх Комиссариатне, ВКП(б) райкомĕсемпе хула комитечĕсене, райсоветсен исполкомĕсене культурăллă ĕçе лайăхлатмалли татăклă мерăсем йышăнма, августăн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр вулав çурчĕсене, колхозсенчи клубсене, районсенчи культура çурчĕсене йĕркене кĕртсе, вĕсен ĕçне вăйлатма хушса хăварчĕ.

Чылай районсенчи партипе совет организацийĕсем ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн постановленине тата партин Обкомĕ кăтартса панисене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе сахал мар ĕçлерĕç. Сăмахран, Шăмăршă районĕнче 6 вулав çуртне йĕркене кĕртнĕ тата çĕнĕрен икĕ вулав çурчĕ уçнă. Чурачăк районĕнче те вулав çурчĕсем чылай уçнă. ВКП(б) Куславкка райкомĕ вулав çурчĕсенче ĕçлеме комсомолецсене чылай лартнă, вĕсен пурнăç условийĕсене лайăхлатас тĕлĕшпе мерăсем йышăннă. Халĕ вăл районра 25 вулав çурчĕ ĕçлет. Вĕсенчен 13-шне комсомолецсемпе çамрăксен вăйĕпе юсаса йĕркене кĕртнĕ. Вулав çурчĕсен ĕçне Елчĕк, Красноармейски районсенче те начар мар йĕркеленĕ. Вăл районсенче партипе комсомол организацийĕсем çутĕç учрежденийĕсен ĕçĕпе куллен интересленеççĕ, вĕсене кулленхи ĕçре пулăшса пыраççĕ.

Парти райкомĕсенчен нумайĕшĕсем юлашки вăхăтра çутĕç учрежденийĕсен ĕçĕсем çинчен тăтăшах сӳтсе-яваççĕ, вулав çурчĕсен работникĕсене пулăшас тĕлĕшпе чылай ĕçсем тăваççĕ.

Çав вăхăтрах республикăри хăшпĕр районсенче вулав çурчĕсен ĕçне халĕ те тивĕçлипе йĕркелемен-ха. Çапла, Советски районра вулав çурчĕсемпе клубсем çурри не яхăн ĕçлемесĕр лараççĕ. Чемей ялсоветĕнчи вулав çурчĕ ялсоветри пĕр пӳлĕмре вырнаçнă. Анчах вăл иртнĕ çултанпах ĕçлемест. Мĕншĕн тесен вулав çурчĕн заведующийĕ çук. Апла пулин те вулав çуртĕнче ĕçлеме çын тупас ыйтупа никам та интересленмест. Ялсовет председателĕ Степанов юлташ вулав çурчĕн заведующине штатран та кăларса пăрахма ĕлкĕрнĕ. Çавăн пекех Асламас ялсоветĕнчи вулав çурчĕ те работник çук пирки ĕçлемесĕр тăрать.

Вулав çурчĕсенчи библиотекăсенче çĕнĕ кĕнекесем сахал. Çав вăхăтрах районти çутĕç пайĕнче 2.000 тенкĕлĕх кĕнеке выртать. Вĕсене ялсовечĕсем укçа куçарман пирки кăна салатмаççĕ. Районри вулав çурчĕсенчен ытларахăшĕ юлашки вăхăтчен центрта тухакан хаçатсене илеймеççĕ.

Районри культура çурчĕн тата библиотекăн ĕçне пĕтĕмпех япăхтарса янă. Вĕсенче нимĕнле йĕркелĕх те çук. Библиотекăри кĕнекесен шкафĕсем тата вуламалли пӳлĕм яланах уçă тăраççĕ. Çавна пула кирлĕ кĕнекесене салатса пĕтереççĕ. Библиотека заведующийĕ Григорьева юлташ кĕнеке фондне сыхласа усрассишĕн тивĕçлипе тăрăшмасть.

Çӳлерех асăннă йĕркесĕрлĕхсем пĕтĕмпех ВКП(б) райкомĕн куçĕ умĕнче пулса иртеççĕ. Апла пулин те, йĕркесĕрлĕхсене пĕтерес тесе вăл татăклă мерăсем йышăнман. ВКП(б) райкомĕ тата унăн секретарĕсем çутĕç организацисене ертсе пырас ĕçрен пăрăнса тăраççĕ. çутĕç пайне, пуçламĕш парторганизацисене тата ВЛКСМ райкомне çак ĕç çинчен асăрхаттарса тăмаççĕ. 1944 çулта ВКП(б) райкомĕ çутĕç учрежденийĕсен ĕçĕсем çинчен пĕр хутчен те сӳтсе-явман. ВКП(б) райкомĕ çутĕç учрежденийĕсен ĕçĕсемпе питех те сахал интересленни çинчен районри çутĕç пайĕн инспекторне хуçалăх ыйтăвĕсемпе ĕçлеттерни те лайăх ĕнентерсе парать.

Сĕнтĕр, Первомайски тата ытти хăшпĕр районсенче те ĕçсем çавăн евĕрлех пулса пыраççĕ. Вăл районсенчи партипе комсомол организацийĕсем çутĕç учрежденийĕсен ĕçне лайăхлатассишĕн тăрăшмаççĕ, вĕсене пулăшмаççĕ.

Çутĕç учрежденийĕсене Чăваш АССР Çутĕç Комиссариачĕ те çителĕксĕр ертсе пырать. Вăл ВКП(б) Обкомĕ краеведени музейне уçасси пирки панă кăтартăва халĕ те пурнăçа кĕртмен.

Вулав çурчĕсемпе клубсем, библиотекăсем — культурăллă ĕçĕн вучахĕсем пулса тăраççĕ. ВКП(б) райкомĕсемпе хула комитечĕсен вĕсене куллен пулăшса пымалла, халăх хушшинче культурăллă ĕçе вăйлатма пулăшмалла. Чи малтанах, çутĕç учрежденийĕсенче ĕçлеме пултарулла кадрсем кирлĕ таран суйласа илесси çине тимлĕн çаврăнса пăхас пулать. Çутĕç работникĕсем валли лайăх ĕçлеме условисем туса памалла.

Хальхи тапхăрта çутĕç учрежденийĕсене хĕле хатĕрлес тĕлĕшпе уйрăмах тимлĕн тăрăшас пулать. Çуртсене юсамалла, вутă çителĕклĕ хатĕрлемелле. Ялсенче радио ĕçне лайăхлатса пымалла. ВКП(б) тата ВЛКСМ райкомĕсен ялсенче пулакан уполномоченнăйĕсем çутĕç учрежденийĕсен ĕçĕпе ытларах интересленме тивĕçлĕ.

Партипе правительство ĕççыннисем хушшинче культурăллă ĕçе лайăх йĕркелессишĕн яланах тимлĕн тăрăшаççĕ. Пирĕн государство вăрçă вăхăтĕнчи йывăр условисенче те çутĕç работникĕсен пурнăç условийĕсене лайăхлатма кирлĕ мерăсем йышăнать. Нумай пулмасть, СССР Совнаркомĕ вулав çурчĕн, ялти клубпа библиотека заведующийĕн, культура çурчĕсен директорĕсемпе художествăллă руководителĕсен ĕç укçине ӳстересси çинчен постановлени йышăнчĕ. Ку ĕнтĕ партипе совет организацийĕсене çутĕç учрежденийĕсенче ĕçлеме пултарулла кадрсем суйласа илме майсем туса парать.

Çутĕç учрежденийĕсен ĕçне лайăхлатни ĕççыннисен культурине çĕклеме, вĕсен производствăри активлăхне вăйлатма пулăшать. Çакăн çинчен пирĕн пĕр минутлăха та манма юрамасть.

И. ВАСИЛЬЕВ.
ВКП(б) Обкомĕн пропагандăпа агитаци отделĕн инструкторĕ.

Комсомолăн Шупашкар хулинчи активĕн пухăвĕ

Çак кунсенче Шупашкарта комсомолăн Шупашкар хулинчи активĕн пухăвĕ пулса иртрĕ. Пуху ВЛКСМ Центральнăй Комитечĕн бюровĕ «ВЛКСМ Чăваш Обкомĕн ĕçĕсем пирки» йышăннă постановлени çинчен ВЛКСМ Обком секретарĕн Михайлов юлташăн докладне итлесе сӳтсе-яврĕ.

ВЛКСМ Центральнăй Комитечĕ, ВЛКСМ Чăваш Обкомĕ çителĕксĕр ĕçленине палăртса, унăн ĕçĕнчи çитменлĕхсене хытă критикленĕ. ВЛКСМ Центральнăй Комитечĕ палăртнă çитменлĕхсем комсомолăн хулари организацийĕсен ĕçĕнче те пур. ВЛКСМ хула Комитечĕ пуçламĕш организацисене кирлĕ пек ертсе пымасть, вĕсен ĕçĕнчи çитменлĕхсене çийĕнчех палăртмасть, активпа сӳрĕк ĕçлет. Хула комитечĕ çумĕнчи ялан ĕçлекен комиссисен ĕçне тивĕçлипе йĕркелемен. Çителĕксĕр ертсе пынă пирки, комсомолăн чылай пуçламĕш организацийĕсем начар ĕçлеççĕ.

Торф кăларакан предприятири, Чебторгри, пир-авăр тĕртекен фабрикăри тата ытти чылай пуçламĕш организацисенче политикăллă-массăллă ĕçе начар йĕркеленĕ, çамрăксемпе комсомолецсене воспитани парас ĕçе производство задачисемпе çыхăнтарса пымаççĕ. Çамрăксене хамăрăн тăван çĕршыв историйĕпе тата хальхи тапхăрти лару-тăрупа паллаштарас ĕçе организацилемен. Политикăллă-массăллă ĕçе начар организацилениине пула, ВЛКСМ организацийĕсен йышĕ хуллен ӳсет. Кăçал пĕрремĕш квартăлта комсомол ретне 304 çамрăка илнĕ пулсан, иккĕмĕш квартăлта вара 169 çамрăка кăна комсомола илнĕ. Иртнĕ 8 уйăх хушшинче хулари пуçламĕш организацисенчен 20-шĕ комсомол ретне пĕрер çын кăна илнĕ. Вĕсен шутне пир-авăр фабрикинчи, «Кожупряжь» артелĕнчи, табак фабрикинчи организацисем кĕреççĕ. Коган юлташ секретарь пулса ĕçлекен организаципе чăлха фабрикинчи организаци те хуллен ӳсеççĕ.

Çамрăксене комсомола явăçтарасси уйрăмах промысла кооперации артелĕсенче начар пырать. Хулари «Красный кустарь», «Металлист», «Пекарь» тата ытти хăшпĕр артельсенче ку тарана çитсе те комсомол организацисем туман.

Комсомол организацисемпе вĕсен секретарĕсем çарпа физкультура ĕçне йĕркелес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Чылай организацисенче художествăллă пултарулăх кружокĕсем организацилемен, шашкăпа шахмăт ăмăртăвĕсем тата физкультура вăййисем иртермеççĕ. Хулари организацисенчен виççĕшĕн кăна физкультура площадкисем пур.

Комсомол пухăвĕсене иртересси не те тивĕçлипе йĕркелемен-ха. Чылай организацисенче пухусене сайра хутра кăна иртереççĕ. Çапла, Чебторгри, статистика управленийĕнчи тата прокуратурăри пуçламĕш организацисем кăçал 8 уйăх хушшинче те пĕрер пуху кăна иртернĕ. Комсомолецсен пухăвĕсенче ВЛКСМ хула комитечĕ хушнă ыйтусене çеç сӳтсе-яваççĕ. Чылай организацисенче протоколсене кирлĕ пек çырмаççĕ.

ВЛКСМ Центральнăй Комитечĕн XII-мĕш пленумĕ «Комсомолăн шкулсенчи ĕçне лайăхлатмалли мерăсем çинчен» йышăннă постановление чылай çĕрте сӳрĕккĕн пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Комсомолăн шкулсенчи организацийĕсем (арçын ачасен 2-мĕш номерлĕ, хĕрачасен 3-мĕш номерлĕ шкулĕсенче) учительсемпе шкул руководителĕсене вĕренӳпе воспитани ĕçне лайăхлатма çителĕксĕр пулăшаççĕ. ВЛКСМ хула комитечĕн бюровĕ пионер вожатăйĕсене начар пулăшать. Арçын ачасен 2-мĕш шкулĕнче пионер вожатăйĕ те çук-ха. Пионерсен çурчĕ те çителĕксĕр ĕçлет.

Комсомолăн хула комитечĕ çамрăк рабочисене тухăçлăн ĕçлеме условисем туса парас енĕпе тăрăшмасть. Макарон, пир-авăр фабрикисенчи, Атăл леш енчи электростанцинчи организацисем ку тарана çитсе те общежитисене хĕле хатĕрлес ĕçе хутшăнман.

Пренире тухса каланă юлташсем, ВЛКСМ Центральнăй Комитечĕ йышăннă постановлени пĕтĕмпех тĕрĕс пулнине йышăнса, комсомол организацисен ĕçĕнчи çитменлĕхсене хытă критиклерĕç. Комсомолăн Атăл леш енчи электростанцинчи комитечĕн членĕ Мичурина юлташ хула комитечĕн работникĕсем çитменлĕхсене пĕтерме вырăнсене тухса пулăшу паманнине палăртрĕ. Хула комитечĕ пуçламĕш организацисене тивĕçлипе пулăшманни Монахова юлташ каласа панинчен те уçăмлăн курăнать. Монахова юлташа комсомола кĕнĕ хыççăнах пуçламĕш организаци секретарĕ пулма суйланă. Çакăн хыççăн кăштах вăхăт иртсен, пулăшас вырăнне, ăна хула комитетне чĕннĕ те, начар ĕçлетĕн тесе, ятлама тытăннă.

ВЛКСМ Центральнăй Комитечĕн представителĕ Басматов юлташ, комсомол организацийĕсем çамрăксене воспитани парас тĕлĕшпе начар ĕçленине палăртса, вăл ĕçе çывăх вăхăтрах лайăхлатмалли майсене кăтартса пачĕ.

ВЛКСМ хула комитечĕн секретарĕ Трусова юлташ хăйĕн сăмахĕнче хула комитечĕ çамрăксемпе таччăн çыхăнса ĕçлеменнине, пуçламĕш организацисен секретарĕсене ертсе пыма вĕрентес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçленине йышăнчĕ, малашне вăл çитменлĕхе пĕтерме пулчĕ.

Комсомол активĕн пухăвĕнче ВКП(б) хула комитечĕн секретарĕ Романова юлташ сăмах тухса каларĕ. Вăл комсомол организацийĕсем чăваш çамрăкĕсене воспитани парас тĕлĕшпе начар ĕçленине палăртрĕ. Предприятисемпе учрежденисенче ĕçлекен чăваш çамрăкĕсенчен чылайĕшĕсем вырăс чĕлхине начар пĕлеççĕ. Комсомол организацийĕсем çавна шута илмеççĕ. Чăваш çамрăкĕсем валли лекцисемпе докладсем иртересс[illegible] организацилемен.

Комсомол активĕн пухăвĕ, комсомолăн хулари организацийĕсен ĕçне лайăхлатмалли мероприятисене палăртса, тивĕçлĕ решени йышăнчĕ.

УКРАИНĂРИ ÇАМĂЛ ПРОМЫШЛЕННОСТЬ ПРЕДПРИЯТИЙĔСЕНЕ ЮСАСА ХУТА ЯНИ

Кăçал Украинăри çăмăл промышленноçăн 64 предприятине юсаса хута яраççĕ.

Киевра, Харьковра, Полтавăра, Кременчугра тата ытти хуласенче те нимĕçсем ишсе хăварнă тир-сăран завочĕсене туса çитереççĕ. Çав заводсем çулталăк хушшинче темиçе пин тонна хытă сăран тата темиçе миллион дециметр çиеле хумалли сăран туса хатĕрлемелле.

Киеври 2 атă-пушмак фабрики ĕçлеме тытăнаççĕ, Харьковра, Артемовскра тата Днепропетровскра та атă-пушмак тăвас ĕç сарăлать.

Хальхи вăхăтра çĕвĕ çĕлекен фабрикăсемпе трикотаж фабрикисене юсаса хута ярас тĕлĕшпе вăйлă ĕçлеççĕ. Çĕвĕ çĕлекен 13 фабрика кăçалах тумтирпе кĕпе-йĕм йышлăн туса кăларма пуçлаççĕ. Харьковри чăлха фабрики 8 миллион мăшăра яхăн чăлха туса кăларать.

Пир-авăр, галантерея таварĕсем, савăт-сапа, кĕленче тата хаклă йышши тиртен тăвакан япаласене çĕнĕрен тума пуçлаççĕ. (ТАСС).

Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенчи суйлав кампанийĕ

Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенче кашни високоснăй çулăн ноябрь уйăхĕнчи пĕрремĕш ытларикун президента суйласа иртереççĕ. Государство пуçлăхĕпе пĕрле США парламенчĕн — Конгресĕн пĕтĕм аялти палатине тата çӳлти палатăн виççĕмĕш пайне суйлаççĕ.

Президента суйласси икĕ сыпăкпа пулса иртет. Сасăлама право пур çынсем суйлавçăсене суйлаççĕ, çав суйлавçăсем вара хăйсем енчен президента суйлаççĕ. Суйлавçăсен хисепĕ икĕ палатăн — представительсен палатипе сенат членĕсен хисепĕ чухлĕ пулать. Представительсен палатин членĕсене икĕ çуллăха, штатри халăх хисепĕ мĕн чухлине кура, суйлаççĕ, сенаторсене вара—ултă çуллăха, кашни штатран икĕ сенатор суйлаççĕ. Кашни икĕ çултан сенатăн виççĕмĕш пайĕ çĕнелсе пырать.

Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенчи нациллĕ суйлавсем яланах паллă çулта, паллă уйăхпа кунра пулса иртеççĕ. Суйлавсене нихăçан та тепĕр вăхăта куçармаççĕ, çавăн пекех тата срокчен те туса иртермеççĕ. Тĕнчери пĕрремĕш вăрçă та, иккĕмĕш вăрçă та çав çирĕпленнĕ йĕркене нимĕнле улшăнусем те кӳмен. Çав йĕрке президент вилес пулсассăн та пăсăлмасть, унăн вырăнне вице-президент йышăнать. Вице-президента та мĕн те пулин пулас пулсан, ăна урăх çын улăштарать. Анчах суйлавсем, високоснăй çулăн ноябрь уйăхĕ çитмесен, нурпĕрех пулмаççĕ. Суйлавсене правительство та, конгресс та хăйсемшĕн майлăрах вăхăта куçарма пултараймаççĕ.

США президентне питĕ пысăк полномочисем панă. Вăл государствăн пуçлăхĕ, правительствăн премьерĕ, çĕршыври хĕçпăшаллă вăйсен верховнăй çулпуçĕ пулса тăрать.

Анчах хăйсен ĕçĕн чи пахарах енĕсем тĕлĕшпе США президенчĕпе правительствин прависем, сăмахран, Великобритани премьерĕпе правительствиннинчен чылай ансăртарах. Англире те, Америкăра та правительство хăй аллинче ĕç тăвакан влаçа кăна тытса тăрать. США-ра закон кăларакан власть—конгресс аллинче, Великобританире вара — парламент аллинче. Анчах Британи премьерĕн парламентра сасăсем яланах ытларах пулаççĕ. Вăл хăй тата унăн кабинечĕн членĕсем сасăсен ытларахăшне хăйсем тытса тăраççĕ, вĕсем çав сасă ытларахăшĕ çине таянса тата унăн ячĕпе ĕçлеççĕ. Америка конгресĕнче депутатсен ытларахăшĕ президента хирĕç тухса калать. Президент хăй те, унăн правительствин министрĕсем те конгресс членĕсем пулма пултараймаççĕ. Англи правительстви ăна парламентăн ытларах депутачĕсем хӳтĕлеме пăрахиччен влаçра тăрать. США правительстви конгреса пăхăнмасть. Конгресс правительствăна отставкăна тухма хушма пултараймасть. Çав вăхăтрах, Конгресс килĕшмесен, Америка правительстви государствăн чи паха ыйтăвĕсене, вăл шутра политикăн тĕп ыйтăвĕсене те, татса пама пултараймасть.

Сăмахран, США правительстви, конгресс килĕштермесĕр, ют çĕршывсене кивçен пама пултараймасть. Правительство ют çĕршывсемпе тунă договорсене сенат ырлама тивĕçлĕ. Договор, уншăн сенат депутачĕсен виçĕ пайĕнчен икĕ пайĕ сасăласан тин, законлă вăя кĕрет. Сенат депутачĕсем — сенаторсем пурĕ 96 çын пулаççĕ. США правительстви алă пуснă пĕтĕм тĕнчери кирек мĕнле килĕшĕве те 33 сенатор пăрахăçа кăларма пултарать. Америкăра çывăх вăхăтра ют çĕршыв государствисемпе чылай килĕшӳсем тăвасси курăнса тăнă пирки конгреса суйлассине уйрăмах пысăк вырăна хураççĕ.

США-ра ĕç тăвакан тата законсем кăларакан влаçшăн кĕрешни, тĕрĕссипе, икĕ пысăк парти—республикăллă тата демократиллĕ партисем пĕр-пĕринпе суйлав умĕн кĕрешни пулса тăрать. 1940 çулта президента суйланă чухне çав икĕ парти мĕнпур сасăсенчен 99 процент пухнă.

Кăçалхи июньпе июль уйăхĕсенче Чикаго хулинче çав партисен пĕтĕм Америкăри съезчĕсем пулса иртнĕ. Çав съездсенче республиканецсем тата демократсем президента тата вице-президента суйламалли хăйсен кандидачĕсене тăратнă тата суйлав платформисене йышăннă.

Демократиллĕ партин съезчĕ «Рузвельт тата çĕнтерӳ», «Рузвельт тата нумай вăхăтлăха мир» текен лозунгпа пулса иртнĕ. Съезд ытларахăш сасăсемпе президента суйлама Рузвельта кандидата тăратнă. Рузвельт ĕнтĕ государство пуçĕнче 12 çул хушши тăрать.

Рузвельта Америка халăхĕ пысăка хурса хисеплет. Вăл тытса пыракан тулашри политика ССР Союзне йышăнасси патне, унтан вара фашистла агрессие хирĕç пĕрле туслă пулса кĕрешесси патне илсе пычĕ. Профсоюзсен чи пысăк пĕрлешĕвĕсем Рузвельта суйлассишĕн кампани сарса пыраççĕ. Суйлавçăсен пысăк йышлă массисем Рузвельтăн политика тĕлĕшпе çав тери пуян опыт пуррине шута илеççĕ. Государство пуçлăхне çавăн пек опыт, уйрăмах вăрçă вăхăтĕнче, питĕ кирлĕ пулса тăрать.

Республиканецсем Рузвельтăн тулашри политикине хирĕç тăраççĕ. Халиччен изоляционизм политикишĕн тăнă республиканецсен тулашри политикăллă программинче халĕ пĕтĕм тĕнчери туслăх çинчен калакан сăмахсем пур. Анчах, Америкăри обозревательсем кăтартса панă тăрăх, республиканецсен политикинчи çавăн пек саврăнăçу США-ри халăхсен анлă масси изоляционизма халĕ хисеплеме пăрахнă пирки пулса иртнĕ. Республиканецсен лидерĕсем Тафт тата Гувер Тегеранри конференцин решенийĕсене хирĕç тăнипе паллă пулса тăраççĕ. Вĕсем çавăн пекех тата союзниксен çарĕсем Европăна пырса кĕрессине хирĕç те туха-туха каланă. Республиканецсен изоляционистла шухăшĕсем Америкăн вăрçă ресурсĕсене сарма та нумай чăрмантарнă. Вĕсем, сăмахран, налог политики пек паха ыйтусенче те куç-кĕретĕнех реакциллĕ политика йышăнса тăраççĕ.

Республикăллă парти енчен президента суйлама кандидата Нью-Йорк штачĕн хальхи губернаторне Томас Дьюине тăратнă. Вăл 1940 çултах республикăллă партин съездĕнче президента суйлама тăратнă кандидатсенчен пĕри пулнă. Ун чухне Дьюи изоляционист пулнă. Кăçалхи çул вăл темиçе хутчен те пĕтĕм тĕнчери туслăх майлă пулса туха-туха каланă. Анчах Америкăри хăшпĕр обозревательсем Дьюин çав сăмахĕсене унăн шухăшĕсенче пулса иртнĕ улшăнусем вырăнне хумаççĕ, çав сăмахсене Дьюин суйлав умĕнхи тактики вырăнне хурса хаклаççĕ. Халăх массисем тата обществăн анлă ушкăнĕсем хальхи вăхăтра, вăрçа çĕнтерӳпе вĕçлес тата нумай вăхăтлăха çирĕп мир туса хурас шутпа, демократиллĕ çĕршывсемпе пĕрле ĕçлес политикăшăн тăраççĕ.

Кăçалхи июль уйăхĕнче Америкăри «Форчун» журнал халăхăн тĕрлĕ сийĕсенчен вĕсем пулас суйлавсем çине мĕнле пăхни çинчен тĕплĕн ыйтса пĕлнĕ. Çавăн пек ыйтса пĕлни çакна кăтартса панă: США-ри пĕтĕм халăхăн виçĕ пайĕнчен икĕ пайĕ Рузвельта тăваттăмĕш сроклăха президента суйлассишĕн тăрать.

Союзниксен çарĕсем Европăра çĕнтерӳсем туса пыни, США хĕçпăшаллă вăйĕсен Лăпкă океан çинчи активлăхĕ ӳссе пыни, —çаксем пурте ĕнтĕ Рузвельтăн позицине вăйлăлатаççĕ. Рузвельтăн ятне çарта пысăк хисепе хурса хаклани çар çыннисем уншăн сасăлас ĕçре паха вырăн йышăнса тăрать. Пĕлекен çынсем çакна кăтартса параççĕ: ноябрьте пулмалли суйлавсене 4 миллионтан кая мар çар çынни хутшăнмалла.

В. ЛАЙ.

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, сентябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ сентябрĕн 23-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Булонь хули районне тăшмантан тасатса пĕтернĕ, унта Ле-Порталь хулине йышăннă. Енер фронтăн çурçĕр участокĕнче кунĕпех хаяр çапăçусем пынă. Союзниксен çарĕсем Ваал шывĕн çурçĕр хĕррине каçнă та хаяррăн çапăçнă хыççăн Неймеген хулипе Арнгем хули хушшинче анатри Рейнăн (Рейн шывĕн çурçĕр енчи хăйне уйрăм юхăмĕн) кăнтăр хĕрри патне пырса тухнă. Тăшман союзниксен çарĕсем тунă савăлăн хĕвелтухăç хĕррине вăйлă атакăланă, анчах та союзниксен çарĕсем çав савăлăн никĕсне каллех аслăлатнă, мĕншĕн тесен вĕсем Буа-ле-Люк каналĕ çинче çĕнĕ каçă хывнă тата Весс хулинчен иртсе кайса малалла куçнă. Союзниксен çарĕсем Аахен хулинчен хĕвелтухăçнерехре Штольберг хулине туртса илнĕ, халĕ вĕсем тăшман тĕллĕн-тĕллĕн хирĕç тăнине пĕтерсе пыраççĕ.

Голландипе Германи чиккинчен пуçласа Люневиль хули патне çитиччен улшăнусем сахал пулнă. Нимĕçсем Штольберг хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре контратакăсем тунă, анчах та союзниксем çав атакăсене пурне те сирсе янă, нимĕçсене йывăр çухату тӳстернĕ. Тăшманăн пулемет йăвисемпе çулсем çинчи засадисем хаяррăн хирĕç тăраççĕ. Дикирх хули районĕнчен хĕвелтухăçнерехре союзниксен чаçĕсем кăштах каялла чакнă. Ытти секторсенче пĕтĕм фрончĕпех патрульсем вăйлă кĕрешеççĕ.

Мозель шывĕн улăхĕнче тăшман Мец хулинчен 5 миля кăнтăртарахра ларакан Кун-Сюр-Сель хули патĕнче контратака тунă, ку атакăна союзниксен чаçĕсем сирсе янă. Союзниксен чаçĕсем Эпиналь хули патне çитнĕ. Кунтан кăнтăртарахра чылай пунктсенче Мозель шывĕ урлă каçăсем хывнă. Кăнтăр-хĕвелтухăç еннелле Ревирмон хули патнелле каякан çулсене тăшман хытă хӳтĕлет. Кунтан кăнтăртарахра Мелисэ хулине туртса илнĕ.

Союзниксен авиацийĕ Çурçĕр Францири, Голландири тата Хĕвеланăç Германири транспорт объекчĕсене тапăннă тата союзниксен çарĕсене тăшманпа çапăçма пулăшса пынă.

ЛОНДОН, сентябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ сентябрĕн 23-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Союзниксен çарĕсем пур фронтсенче те малалла куçса пынă. Фиренцуола хулинчен хĕвеланăçнерехре 5-мĕш армири Америка чаçĕсем «Гот линийĕнчи» татнă вырăна аслăлатнă.

Союзниксен авиацийĕпе карапĕсем тăшманăн çапăçу районĕнчи вăрçă объекчĕсене пенĕ.

ГОЛЛАНДИРЕ СОЮЗНИКСЕМ СЫВЛĂШРАН ÇĔНĔ ПЫСĂК ДЕСАНТ АНТАРНĂ

ЛОНДОН, сентябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, союзниксем Голландире сентябрĕн 23-мĕшĕнче кăнтăрла иртсен сывлăшран çĕнĕ пысăк десант антарнă.

* * *

ЛОНДОН, сентябрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ сентябрĕн 24-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Сентябрĕн 23-мĕшĕнче Голландире союзниксен çарĕсем шăтарса кĕнĕ районра йывăр çапăçусем пынă. Пуринчен те хаяртарах çапăçусем Арнгем хули çывăхĕнче пулса иртнĕ. Унта тăшман питĕ хытă хĕсет. Союзниксен çарĕсем Недер тата Рейн шывĕсемпе Вааль шывĕ хушшинчи районра çирĕпленсе ларнă. Союзниксен çарĕсем хăйсен Неймегенри позицийĕсене лайăхлатнă, Буа-ле-Дюк каналĕ районĕнче тăшмана тапăнма тунă укрепленире çирĕпленсе ларнă, вăл союзниксен çарĕсем шăтарса кĕнĕ вырăнăн никĕсĕ çывăхĕнче. Союзниксен сывлăшран антарнă çарĕсем патне кун каçах çĕнĕ вăйсем илсе пырса тăнă.

Антверпен хулинчен хĕвелтухăçнерехре союзниксен çарĕсем Маас—Эско каналĕ районĕнче тăшмана тапăнма укреплени тунă та малалла кайнă.

Гейленкирхен хули районĕнчен пуçласа Мерт шывĕ улăхне çитиччен пĕтĕм фрончĕпех лару-тăру улшăнманпа пĕрех. Аахен хули районĕнче тăшман союзниксен разведка отрячĕсем çине персе тăрать, çавăн пекех тата хулапа юнашар ялсенчен хытă перет. Унта тăшман çарĕсем лайăх окопсем туса çирĕпленсе ларнă пулмалла.

Штольберг хулинче тăшман хирĕç тăракан уйрăм вырăнсене пĕтерсе тăкнă, анчах та хуларан кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре малалла куçса пыракан союзниксен çарĕсене хирĕç тăшман хытă çапăçать.

Люксембургăн çурçĕр пайĕпе юнашар выртакан фронт участокĕнчи çĕрсене тăшмантан тасатаççĕ.

Союзниксен çарĕсем Нанси хулинчен 9 миля çурçĕрелле кайнă, Морэ хулине ирĕке кăларнă.

Союзниксен авиацийĕ тăшман объекчĕсене атакăланă.

ЛОНДОН, сентябрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ сентябрĕн 24-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Американецсен 5-мĕш армийĕн чаçĕсем Фиренцуола хулинчен çурçĕртерехре «Гот линине» татнă хыççăн хăйсен çитĕнĕвне вăйлатса пыраççĕ. Çак хуларан çурçĕртерехре вĕсем паха çӳллĕ вырăнсем йышăннă.

Сылтăм флангра американецсен 5-мĕш армийĕнчи Англипе Инди чаçĕсем темиçе паха çӳллĕ вырăна йышăннă, вĕсем Палаццуоло хули патнелле çывхарса пыраççĕ.

Фронтăн Адриатика участокĕнче 8-мĕш арми чаçĕсем сарлака фронтпа Мареккиа шывĕ урлă каçса кайнă. Римини хулинчен çурçĕртерехре, Балларна хулинчен кăнтăртарахра тăшман 8-мĕш армири Англи чаçĕсене хирĕç вăйлă çапăçать. Сан-Марино хули хальхи вăхăтра пĕтĕмĕшпех союзниксен аллинче. Çак хуларан çурçĕртерехри çӳреме йывăр вырăнта тăшманăн темиçе вăйлă контратакине сирсе янă. Союзниксен çарĕсем икĕ енчен наступлени туса пынине кура, тăшман хăйĕн малтанах туса хунă «Гот линийĕнчи» позицийĕсене пăрахса хăварнă, Фут çулĕнчен хĕвеланăçнерехри участока кăна хăй аллинче тытса тăрать. 8-мĕш армири Англи чаçĕсем куçса çӳреме йывăр вырăнта Тибр шывĕпе Арно шывĕн тури улăхĕсенчен çурçĕрелле чылай кайнă, вĕсем хуласемпе ялсем нумай туртса илнĕ.

Сентябрĕн 23-мĕшĕнче йывăр бомбардировщиксем Судетри промышленность объекчĕсене, Австрири сортировка станцийĕсене тата Çурçĕр-хĕвелтухăç Италири чугун çул кĕперĕсене атакăланă.

Союзниксен авиацийĕ тăшманăн Югославири вăрçă объекчĕсене хирĕç хытă çапăçнă.

ФРАНЦИН ШАЛТИ ВĂЙĔСЕНЕ ЯЛАНХИ ÇАР ШУТНЕ КĔРТЕССИ ÇИНЧЕН ДЕКРЕТ КĂЛАРНĂ

ПАРИЖ, сентябрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Парижри радио пĕлтернĕ тăрăх, «Журнал офисьель» ятлă журналта декрет пичетлесе кăларнă. Çав декрет тăрăх, Францин шалти хĕçпăшаллă вăйĕсене яланхи çар шутне кĕртеççĕ.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔ ГЕРМАНИЕ ТАПĂННИ

ЛОНДОН, сентябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, сентябрĕн 22-мĕшĕнче союзниксен Италири бомбардировщикĕсем, 500 самолетран шутласа, 750 самолета çитиччен, Мюнхенри вăрçă объекчĕсене тата Грецин Ларисса хулинчи сортировка станцине тапăннă. Тăшманăн зенитнăй артиллерийĕ хытă пенĕ. Германи çинче тăшманăн истребительнăй авиацийĕ пулман. Ларисса хулинче (унта нимĕçсем чугун çул вагонĕсемпе паровозсем нумай илсе пырса тултарнă) вăйлă взрывсем пулнă.

ЛОНДОН, сентябрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Англин авиаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, сентябрĕн 24-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕсем Германири Дюссельдорф хулинчен темиçе миля кăнтăр-хĕвеланăçнерехре ларакан Нейсс хулипе гаванне тата Мюнстер хулине тапăннă. Çавăн пекех тата Бохум хули çине те бомбăсем пăрахнă.

Иртнĕ çĕр союзниксен самолечĕсем Рейн шывĕпе Маас шывĕ çинчи баржăсене, çавăн пекех тата тăшманăн Кельн хулинчен хĕвеланăçнерехри çулпа пынă транспортне те атакăланă.

НИМĔÇСЕМ РЕЙН ОБЛАÇĔНЧИ ХАЛĂХА УРĂХ ВЫРĂНА КУÇАРАÇÇĔ

ЛОНДОН, сентябрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио пĕлтернĕ тăрăх, нимĕç влаçĕсем, союзниксен наступленине пула, Рейн шывĕн сулахай енче пурăнакан пĕтĕм граждăнла халăха ирĕксĕрех урăх çĕре куçарма тытăннă, чи малтан Аахен хулипе Кельн хули районĕнчи халăха, 2 миллион çынна яхăн, куçараççĕ. Нимĕç влаçĕсем кăларнă приказ тăрăх, кунти мĕнпур халăха урăх çĕре куçармалла. 16 çултан пуçласа 60 çула çитнĕ арçынсене çеç хăвараççĕ, вĕсене окопсем чавма тата оборона валли кирлĕ ытти ĕçсене тума мобилизацилеççĕ. Ватă çынсемпе кăкăр ĕмекен ачасем пур хĕрарăмсене кăна чугун çулпа куçараççĕ. Ыттисене çуран куçса кайма хушнă.

ЮТ ÇĔРШЫВСЕН СУДНИСЕНЕ ШВЕЦИ ТЕРРИТОРИНЕ КĔРЕКЕН ШЫВСЕМ ТĂРĂХ ИШСЕ ÇӲРЕМЕ ЧАРНĂ

СТОКГОЛЬМ, сентябрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Швецири радио пĕлтернĕ тăрăх, Стокгольмра çакăн пек официальнăй пĕлтерӳ пичетлесе кăларнă:

«Балтика тинĕсĕнче тата çав таврари районсенче лару-тăру пĕтĕмпех улшăнса кайнă пирки Швеци правительстви çапла йышăннă: сентябрĕн 27-мĕшĕнчен пуçласа ют çĕршывсен суту-илӳ суднисене Швеци территорине кĕрекен шывсем тăрăх—Ботнически залив тата Балтика тинĕсĕ тăрăх, çав шутра Швецин шалти юханшывĕсем тăрăх та, Торнео шывĕ патĕнчи чикĕрен пуçласа кăнтăралла, Фальстерб каналне çитиччен, ишсе çӳреме памалла мар. Çав кун Швеци шывĕсем тăрăх ишсе çӳрекен суднăсем, ятарласа тунă транзит условийĕсем тăрăх хăйсем çитмелли çĕре çитсе таврăнма пултараççĕ.

РУМЫНИ ПРАВИТЕЛЬСТВИ ПĔРЛЕШӲЛЛĔ НАЦИСЕНЕ ХИРĔÇ ВĂРÇĂ ПУÇЛАНĂШĂН АЙĂПЛИСЕНЕ ТЫТСА ХУПМА ЙЫШĂННĂ

БУХАРЕСТ, сентябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). «Универсул» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Румыни министрĕсен совечĕ решени йышăннă. Çав решени тăрăх, Румыни пĕрлешӳллĕ нацисене хирĕç вăрçă пуçласа янă пирки Румынире пулса тăнă лару-тăрушăн айăплă çынсене пурне те тытса хупмалла.

Югославири çапăçусем

ЖЕНЕВА, сентябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Югославирен пĕлтернĕ тăрăх, Югослави халăхĕн ирĕклĕх çарĕн верховнăй штабĕ çапла пĕлтернĕ: Шумадире Югослави чаçĕсем çаплах наступлени туса пынă, вĕсем Лазаревац хулипе Рудгик хулине йышăннă, çапла вара Югослави халăхĕн ирĕклĕх çарĕн Хĕвеланăç Сербире кĕрешекен чаçĕсемпе пĕрлешнĕ. Ирĕке кăларнă хуласенчи серб хресченĕсем, рабочийĕсем тата ытти çыннисем те, алла хĕçпăшал тытса, пинĕ-пинĕпе Югослави халăхĕн ирĕклĕх çарне каяççĕ. Вальево хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре наступлени туса пыракан Югослави чаçĕсем нимĕçсен колоннине аркатса тăкнă та çурçĕрелле хăваласа янă.

Хĕвелтухăç Сербире Югослави халăхĕн ирĕклĕх çарĕн чаçĕсем Дунай шывĕпе Морава шывĕ патнелле ăнăçлăн куçса пыраççĕ. Далмацире тăшманăн Пелешац çурутравĕ çинче тăрса юлнă юлашки опорнăй пункчĕсене туртса илнĕ.

ЖЕНЕВА, сентябрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Югославирен пĕлтернĕ тăрăх, Югослави халăхĕн ирĕклĕх çарĕн штабĕ çапла пĕлтернĕ: Лазаревац хулине ирĕке кăларнă хыççăн Югослави халăхĕн ирĕклĕх çарĕн чаçĕсем Белград хулинчен кăнтăртарахра кĕрешекен партизансен отрячĕсемпе пĕрлешнĕ, халĕ вĕсем Белград хули патне çитсе пыраççĕ. Шумадире Белград çывăхĕнчи Радовицăри тата Смедеревăри предприятисенчи рабочисем Югослави халăхĕн ирĕклĕх çарĕн чаçĕсем çумне хутшăннă.

СЛОВАКИРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, сентябрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Чехословакин çар влаçĕсем пĕлтернине парать. Пĕлтерӳре çапла каланă: Словакире Св. Мартин районĕнче Чехословаки патриочĕсем тăшманăн танксемпе сывлăшри вăйĕсем пулăшнипе атака пуçласа янă пысăк вăйĕсене хирĕç çапăçаççĕ. Нимĕçсем çавăн пекех тата Превидз хули районĕнче те хытă хĕсме пуçланă. Чехословаксен Телград районĕнчи наступленийĕ малалла ăнăçлăн вăйланса пырать. Нимĕçсене вĕсем йышăнса тăракан позицисенчен хĕссе кăларнă, тыткăна илнĕ тата вăрçă хатĕрĕсене тытса илнĕ. Ваг шывĕ улăхĕнче икĕ енчен те разведка чаçĕсем кĕрешнĕ. Партизансем нимĕçсем оккупациленĕ районсенче хăйсен ĕçĕсене вăйлатнă.

АНГЛИ ИНТЕЛЛИГЕНЦИЙĔ НИМĔÇСЕМ СОВЕТ СОЮЗĔНЧИ ИСКУССТВО ПРОИЗВЕДЕНИЙĔСЕНЕ ТИСКЕРРĔН ПĔТЕРСЕ ТĂКНИ ÇИНЧЕН

ЛОНДОН, сентябрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Англи интеллигенцийĕн темиçе паллă представителĕ çырусем пичетлесе кăларнă. Çав çырусенче вĕсем гитлеровецсем Совет Союзĕнчи искусство произведенийĕсене тискеррĕн пĕтерсе тăкнă пирки тарăхса çыраççĕ.

«Эпĕ нимĕçсем Российăра тискеррĕн ишсе, аркатса çӳрени çинчен йĕрĕнсе вуларăм, — тесе çырать поэт-лауреат Джон Мейлсфилд. — Çав тискер кайăксен ĕçĕсене пула, вырăссен чунĕнче çав тери пысăк вăй çуралчĕ, çав вăй вара тискер кайăксене пĕтерсе тăкрĕ. Вырăссен аслă чунĕ (вăл нумай вăхăт хушши пире хавхалантаракан çăлкуçĕ пулса тăчĕ) çĕнĕрен илемлĕ те тĕлĕнмелле япаласем туса хурасси пирки иккĕленмелли çук. Çав япаласене курма çынсем Российăна пĕтĕм тĕнчерен пырса тăрĕç»,—тет.

Художествăсен королевски академийĕн президенчĕ Альфред Манингс академи ячĕпе çырнă çырура çапла калать: «генисен ырă шухăшлă произведенийĕсене çаратни тата вĕсене кĕвĕççе пĕтерсе тăкни преступлени пулса тăрать, ăна манма çук».

«ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ РАБОЧИ ОРДЕНĂН» ФИНН СЕКЦИЙĔ КАЛАНИ

НЬЮ-ЙОРК, сентябрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). «Пĕтĕм тĕнчери рабочи орденăн» финн секцийĕ Финляндипе Совет Союзĕ перемири тунине ырлать. Финн секцийĕ çапла калать: мир условийĕсем, «финсем нумай вăхăт хушши гитлеровецсем майлă ĕçлесе тăнине шута илсен, питĕ çемçе условисем пулса тăраççĕ. Финсем хăйсен гитлеровецĕсене суд аллине парсан çеç демократиллĕ тĕнче вĕсене хисеплеме тата шанма пултарать», тет.

СОВЕТ СОЮЗĔНЧИ ПРОФСОЮЗСЕН ДЕЛЕГАЦИЙĔ РИМА ПЫРСА ÇИТНĔ

РИМ, сентябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Римра тухакан хаçатсем сентябрĕн 22-мĕшĕнче Рима Совет профсоюзĕсен делегацийĕ пыни çинчен пĕлтерне.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Чăваш АССР Наркомземĕн Сĕнтĕрти колхоз шкулĕ çынсене вĕренме илесси çинчен пĕлтерет.

Шкулта виçĕ отделени пур: ветеринари фельдшерĕсен отделенийĕ (унта 10 уйăх вĕренмелле), счетоводсен отделенийĕ тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетекенсен отделенийĕ (çак отделенисенче 6-шар уйăх вĕренмелле).

Шкула 7 çул вĕреннĕ çынсене илеççĕ. Колхоз шкулне кĕме çакăн пек документсем кирлĕ: миçе çул вĕреннине кăтартакан свидетельство, хăçан çуралнине кăтартакан свидетельство тата колхоз е райçĕрĕç пайĕ панă командировка хучĕ.

Пур отделенисенче те 1944 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕнче вĕрентме тытăнаççĕ.

Заявленисене çак адреспа ямалла: Сундырский район, дер. Кады-кассы, Межрайонная колхозная школа.

Завода çакăн пек работниксем кирлĕ: метала хĕртмесĕр ĕçлес ĕçе пĕлекен инженерсемпе техник-технологсем тата экономистсем, плановиксем, бухгалтерсем, конторăра ĕçлекен служащисем (бухгалтер ĕçне вĕренме учениксене те илеççĕ); токарьсем, слесарьсем, штамповщиксем, прессовщиксем, электромонтерсем, литейщиксем, сварщиксем тата ытти рабочисем те (çак ĕçсене вĕренме учениксене те илеççĕ); строительствăра ĕçлекен рабочисем—платниксем, столярсем, штукатурсем, кăмака тăвакансем, малярсем, грузчиксем, лавçăсем тата подсобнăй рабочисем (çаксене общежитине вырăнаçтараççĕ).

Çак адреспа ыйтмалла: гор. Чебоксары, ул. Карла Маркса, 80, Бюро пропусков. Кашни кун 11 сехетрен пуçласа кăнтăрла иртсен 3 сехетчен ыйтса пĕлме пулать. 5—4.

«Главтабакăн» Чăваш республикинчи конторине çакăн пек работниксем кирлĕ: экспедици заведующийĕ, бухгалтер. Ĕç условийĕсем çинчен Табак фабрикин конторинче (Чувашская ул., 69) ыйтса пĕлме пулать.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

Типографи № 1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2, ф. 6. 59×42 п. л. Тираж 16.000 экз.

НТ 00709